## Самана юрăçи

Тăван культурăна аталантарассишĕн ырми-канми вăй хурса ĕçлекен çынсен ячĕ халăхра яланах пысăк хисепре. Çавăн пек хисеплĕ, мухтава тивĕçлĕ çынсенчен пĕри — чăвашсен паллă композиторĕ Филипп Миронович Лукин. Вăл — совет саманин тивлечĕпе çунат сарнă композитор. Унăн пултарулăхĕнче аслă Ленин, Коммунистсен партийĕ, Тăван çĕршывăмăр, совет çыннисен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă произведенисем тĕп вырăн йышăнаççĕ.

Ф. Лукин Чăваш республикинче Красноармейски районĕнчи Çавалçырма ялĕнче 1913 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнче хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Пулас композитор ача чухнех тăван халăх сăвви-юррине чунтан юратнă, вĕсене итлесе савăннă.

...Çĕнĕ ĕмĕр. Çĕнĕ самана. Çĕршывра, тăван республикăра чăн-чăн хĕрӳ пурнăç вĕресе тăнă. Пысăк улшăнусем çамрăк чăваш каччи чĕринче ырă шухăш-

кӑмӑл ҫуратнӑ. Вӑл таврари ҫӗнӗлӗхсем ҫинчен, телейлӗ ҫамрӑклӑх ҫинчен, халӑх пурнӑҫӗнчи ҫитӗнӳсем ҫинчен юрӑсем хывма ӗмӗтленнӗ, 1928 ҫулта Шупашкарти музыка шкулне вӗренме кӗнӗ. Ӑна кунти чӑваш искусствин паллӑ ӗҫченӗсем Ф.П. Павлов, С.М. Максимов, В.П. Воробьев, В.М. Кривоносов асӑрханӑ.

«Ҫак пултаруллӑ та ырӑ кӑмӑллӑ, хамӑр культурӑшӑн пӗтӗм вӑй-халран ӗҫленӗ ҫынсем манӑн малтанхи вӗрентекенсем пулнӑ», — тет халӗ Филипп Миронович.

Техникумра вӗреннӗ чухнех Лукин юрӑсем кӗвӗлеме пуҫланӑ. Вӑтӑрмӗш ҫулсенче ҫамрӑк композиторӑн пӗрремӗш юррисем ҫапӑнса тухнӑ. Вӗсенчех халӑх чун-чӗрине, шухӑш-кӑмӑлне ҫӗклекен, пурнӑҫа юратма чӗнекен кӗвӗсем янӑранӑ. Каярахпа вӑл хорпа, пӗччен юрламалли юрӑсем хывнӑ, ҫав вӑхӑтрах халӑх юррисене пухнӑ, илемлетсе ҫырнӑ.

1935 ҫулта Филипп Миронович Мускаври консерваторин дирижерпа хор факультетне вӗренме кӗнӗ. Ку уншӑн ҫав тери пысӑк телей, савӑнӑҫ пулнӑ. Унта вӗреннӗ ҫулсенче вӑл Совет ҫӗршывӗ, ҫӗнӗ самана, Коммунистсен партийӗ тӗрлӗ халӑх ывӑлӗ-хӗрӗшӗн чӑн-чӑн тӑванла тӑрӑшнине лайӑх туйса илнӗ... Ҫул уҫӑ: вӗрен, ӗҫле!

Чӑваш каччи консерваторире вӗреннӗ вӑхӑтрах Коммунистсен партине кӗнӗ.

«Пӗтӗм вӑй-хала халӑхшӑн пама ӗмӗтленеттӗм, общество пурнӑҫне активлӑ хутшӑнаттӑм. Ҫӗршывшӑн чун-чӗререн тӑрӑшса ӗҫленинчен ырри, лайӑххи мӗн пултӑр тата!» — тет Филипп Миронович.

1942 ҫулта Ф. Лукин хамӑр республикӑна таврӑннӑ. Чӑваш патшалӑх юрӑпа ташӑ ансамблӗн художество руководителӗнче тата аслӑ дирижерӗнче ӗҫлеме тытӑннӑ.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенче композитор Тӑван ҫӗршывшӑн ҫапӑҫӑва тухма, ӑна сыхлама чӗнекен янӑравлӑ юрӑсем ҫырнӑ. Ҫав ҫулсенче ҫырнӑ юрӑсем хушшинче унӑн «Ҫапӑҫу юрри», «Савнӑ туссем, паттӑрсем», «Колхоз хӗрӗн юрри», Совет Союзӗн Геройне Иван Полякова халалласа ҫырнӑ произведенисене палӑртса хӑвармалла. Филипп Миронович хӑй ертсе пыракан ансамбльпе чылай вӑхӑт фронтра пулнӑ, вӑрҫӑ паттӑрӗсене, совет салтакӗсене 120 концерт панӑ.

Ҫулсем иртеҫҫӗ. Филипп Лукин композиторӑн пултарулӑхӗ вӑй илсе, ҫунатланса пырать. Вӑл хӑйӗн ырӑ ӗҫӗпе тӑван халӑха савӑнӑҫ кӳрет. Кам пӗлмест пулӗ композиторӑн С. Элем сӑвви тӑрӑх кӗвӗленӗ «Ҫамрӑксен юррине»!

Тухрӑм эпӗ Атӑл хӗррине
Итлемешкӗн ҫӗршыв юррине.
Шӑратаҫҫӗ ҫепӗҫ юрӑсем
Кимӗ ҫинчи ҫамрӑк хӗрӗсем...

Тӗлӗнмелле ӑшӑ туйӑмпа ҫырнӑ лирикӑлла юрӑ. Ӑна юрланӑ чух куҫ умне аслӑ Атӑл, тӑван ҫӗр илемӗ, ҫамрӑк каччӑсемпе хӗрсен ытарайми сӑнарӗ тухса тӑрать.

Ф. Лукин — лирикӑлла кӗвӗ-ҫемӗн чӑн-чӑн ӑсти. Унӑн «Савнӑ тусӑма», «Ҫутӑ ӗмӗт», «Сирень», «Юрату юрри», «Тунсӑх», «Ыранччен, чун савни», «Ӗмӗтӗм», «Халь кама юрруна парнелен» тата ытти юррисем чун-чӗрере ырӑ туйӑм ҫуратаҫҫӗ.

Ăслă шухăш, çĕкленӳллĕ кĕвĕ, çĕнĕлле хавхалану пур вĕсенче кашнинчех. Ахальтен мар пулĕ ĕнтĕ Лукин юррисене пур çĕрте те тулли кăмăлпа юрлаççĕ.

Гражданлăх туйăмĕпе кĕвĕленĕ «Аслă Ленин», «Пире парти ырлăх пачĕ», «Чечекленет чăваш çĕршывĕ», «Тулли кăмăлпа», «Хăмла пахчи», «Ялан юрлать чĕре», «Çутă ĕмĕт» тата ытти юрăсем пирĕн музыка культурин ылтăн çӳпçине хаклă тупра пулса кĕрсе юлчĕç.

Кунта эпĕ композиторăн Н. Сандров поэтпа пĕрле çырнă «Çĕршывăм, савăн» юрри пирки уйрăм каласа хăварасшăн. Вăл юрă халăх хушшине çав тери хăвăрт та анлă сарăлчĕ. Ăна халĕ хамăр республикăра çеç мар, Пушкăрт, Тутар республикисенчи хуласемпе ялсенче юрланине те час-часах илтме пулать.

Çапла, Ф. Лукин тăван халăха сахал мар чаплă юрă парнелерĕ. Композитор 1952 çулта «Пире парти ырлăх пачĕ» (сăвви В. Урташăн), «Çамрăксен юрри» (сăвви С.Элемĕн), «Мускав çинчен хунă юрă» (сăвви П. Хусанкайăн), «Хăна юрри» (сăвви В. Веселовăн), «Телейлĕ туслăх» (сăвви В. Давыдов-Анатрин) юрăсемшĕн СССР Государство премине илме тивĕçрĕ.

Композитор хăйĕн творчество ĕçĕ-хĕлне халăх пултарулăхĕпе, сăвви-юррипе, сăмахлăхĕпе çирĕп çыхăнтарнă. Вăл халăх юррисене пухас тĕлĕшпе сахал мар ырă ĕç турĕ. Ку çеç те мар: вĕсене илемлетсе, чун витĕр кăларса, çунат парса каялла тавăрса пачĕ. Эпир Лукин илемлетнĕ «Шур перчетке», «Чĕнтĕрлĕ те кĕпер», «Вăйăра», «Шăпăр» тата ытти юрăсене чун-чĕререн кăмăллатпăр.

Вăл музыка инструменчĕсемпе каламалли произведенисем те сахал мар çырчĕ. Вĕсене час-часах Шупашкартан, Мускавран телевиденипе, радиопа параççĕ, тĕрлĕ концертсенче выляççĕ.

Филипп Миронович ачасене те манмасть. Тăтăшах юрă хыççăн юрă хывать. Вĕсене эпир шкулсенче, пионерсен çурчĕсенче, юрă уявĕсенче концертсенче итлесе савăнатпăр. Çав произведенисенче совет ачисен телейлĕ пурнăçĕ, ĕçченлĕхĕ, вĕренĕвĕ, туслăхĕ палăрса тăрать.

Композитор кун-çул таппипе тан пырать. Унăн произведенийĕсенче — хальхи вĕресе тăракан пурнăçпа унăн хастар çыннисен сăнарĕ тĕп вырăнта. Çĕршывра халăхра пулса иртекен пĕр ĕçрен те аякра тăмасть вăл.

Эпир, чăваш поэчĕсем, Филипп Мироновича хамăр ĕçри çывăх тусăмăр тесе шутлатпăр.Вăл чылай çулсем хушши ĕнтĕ П. Хусанкай, И. Тукташ, В. Урташ, Н. Сандров, А. Кăлкан, А. Галкин, Ю. Петров, Г. Ефимов, А. Эсхель, Ю. Сементер, П. Ялкир тата ытти поэтсемпе пĕрле халăх шухăш-кăмăлне тивĕçтерекен юрăсем çырчĕ.

Мана хама та чылайранпа Ф. Лукинпа пĕрле килĕштерсе, пĕрне-пĕри ăнланса ĕçлеме тӳр килчĕ. Эпĕ ăна хамăн ĕçри çывăх тусăмсенчен пĕри тесе шутлатăп. Тӳрех калатăп: унпа ĕçлеме çав тери кăмăллă. Вăл музыкăна çеç мар, хамăр тăван поэзие те чун-чĕререн туйса тăрать. Мĕн лайăх, мĕн начар, тӳрех пĕр пытармасăр калать. Ку вăл пирĕн ĕçре çав тери кирлĕ япала. Эпĕ унпа пĕрле çума-çумăн ларса хам çырнă сăвăсене мĕн чухлĕ тӳрлетмен-ши! Ĕçлени, тăрăшни харама каймарĕ: пĕрле çитмĕл ытла юрă çыртăмăр.

Вĕсенчен «Октябрь хăвачĕ», «Тăван хула», «Çĕр-планета чĕнет», «Мухтав сире, çĕр ăстисем», «Комсомолецсем, маттур çамрăксем», «Атăл çинче — çĕнĕ ГЭС» тата ытти юрăсем пултарулăх коллективĕсен репертуарне çирĕп кĕрсе

юлчĕç. Ку, паллах, пире татах та тухăçлăрах, лайăхрах ĕçleме хистет, чунчĕрери шухăш-кăмăла çĕклет.

Филипп Миронович хăйĕн ĕçченлĕхĕпе тĕлĕнтерет. Сакăр çĕре яхăн юрăпа музыка произведенийĕ çырнисĕр пуçне вăл 30 çул хушши Чăваш АССР композиторĕсен союзĕн правленийĕн председателĕ пулчĕ. Унсăр пуçне ăна темиçе хутчен те Чăваш АССР Верховнăй, Шупашкар хула Совечĕсен депутатне, КПСС обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕсен, Азипе Африкăри çĕршывсен Пĕрлĕх Комитечĕн членне суйланă. Вăл — СССР, РСФСР композиторĕсен Союзĕсен правленийĕсен членĕ, РСФСР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Государство премине парас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет членĕ.

— Юратнă Тăван çĕршывăмăр, тăван халăхăмăр, Коммунистсен партийĕ мана çын турĕç, аслă çул çине кăларчĕç, хамăр пултарулăха анлăн кăтартма пĕтĕм майсем туса пачĕç. Çавăнпа та пирĕн чун-чĕрере яланах ырă шухăш-кăмăл тапса тăрать, — тет композитор.

Лукин çамрăк композиторсене, музыка çыннисене ĕçре яланах тăванла пулăшса пырать. Уншăн ăна хăйне те çамрăксем чун-чĕререн хисеплеççĕ, юратаççĕ. Совет Союзĕнчи композиторсен V—VII съезчĕсенче Социализмла Ĕç Геройĕ Тихон Хренников Лукин ятне çĕршыври паллă композитор-юрăçсен ячĕсемпе пĕрле асăнса хăварчĕ, унăн ырă ĕçне лайăх хак пачĕ. Çавăн пекех Родион Щедрин, Андрей Эшпай, Мурад Кажлаев (Дагестан), Аркадий Нестеров (Горький хули), Загир Исмагилов (Пушкăртстан) композиторсем Филипп Мироновичăн музыкăри пултарулăхне, ăсталăхне пысăка хурса хаклани те пире савăнтарать.

Тăван çĕршыв Филипп Миронович Лукин пултарулăхне, ырă ĕçне-хĕлне тивĕçлипе хакларĕ. Вăл РСФСР халăх артисчĕ, Чăваш, Дагестан АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ. Ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, икĕ хутчен «Хисеп Палли» орденсемпе наградăланă...

Халăхпа çĕршыв хисепĕ — чи аслă хисеп. Кунта ман пĕр çырури йĕркесене çеç илсе кăтартас килет: «Филипп Миронович! Эпир сире тĕлĕнмелле илемлĕ, хăйне майлă, пысăк ăсталăхпа çырнă произведенисемшĕн чун-чĕререн тав тăватпăр. Вĕсем пире пурнăç илемне туйса илме, музыка искусствин лайăх енĕсене ăнланма пулăшаççĕ.

Эсир çырнă юрăсене эпир яланах юратса юрлатпăр», — тесе çыраççĕ Украина ССРĕнчи Дрогобычри И.Франко ячĕпе хисепленекен институтри муэыкăпа педагогика факультетĕнче вĕренекен студентсем. Кунашкал çырусем — вуншар.

Çак уйăхра пирĕн юратнă композитор 70 çул тултарчĕ. Ĕнтĕ вăл хăйĕн пултарулăхĕ çине кун-çул тӳпинчен пăхать. Тӳперен пăхсан инçет те анлăрах курăнать. Эппин, Филипп Миронович пире малашне те кăмăла çĕклекен юрă-кĕвĕпе хавхалантарĕ.

*Васлей Давыдов-Анатри,*
Чăваш халăх поэчĕ.

Ялав, 1983. Утă уйăхĕ, 7 №. 27 с.